**Шăл мыскари**

*( Аслă тата шкул çулне çитнĕ ачасен ушкăнĕ валли, сценаринче пуканесен театăрĕпе усă курма пулать)*

*(Çак ĕçпе музыка ертӳçисем, воспитательсем, кĕçĕн класра вĕрентекенсем усă курма пултараççĕ )*

Ĕçе тăваканĕ: Музыка ертӳçи Яковлева Ирина Петровна, МБДОУ «Ача сачĕ №5», Канаш хули.

**Тĕп тĕллевĕсем:**

-Ачасене ачаранах хăйсен шăлĕсене упрамалли тата çирĕплетмелли правилăсемпе паллаштарасси.

-Сывлăх, пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнма вĕрентесси.

-Ачасен тăнне, тимлĕхне , вĕсен курăмне малалла аталантарасси.

- Çĕнĕ сăмахсаемпе пуплевре усă курма хăнăхтарасси.

**Туса irттернĕ ĕçсем :**

- Кирлĕ литературăпа усă курса ачасене пирĕн пурнăçра шăлсем мĕнле пĕлтерĕшре тăнине каласа ăнлантарнă

- Шăлсне мĕнле пăхмали тата упрамалли правилăсеме палаштарнă.

- Шăл тухтăрĕн ĕçĕ пирки кирлĕ шайра ăнлантарса панă.

**Ĕç йĕрки.**

***1-мĕш картина***

*Тирпейлĕ пуçтарнă пӳлĕм. Пур япала та хăй вырăнĕнче. Куçка – пӳрт сыхлакан, тепĕр майлă хĕрт-сурт ( Домовёнок), пӳлĕме кĕрет, йĕри-тавра пăхса тухать. Пур япала та тирпейлĕ выртнине курсан хавассăн юрла пуçлать.*

**Куçка :** Кам кулма, туслăн пурăнма юратать,
Вăл пĕр кун та юрăсăр пурнаймасть.
Ăçта юрă-кĕвĕ янăрать-
Унта пур çĕрте те савăнăç, хаваслăх пуранать
Ля-ля-ля, парам- парам, тра-ля-ля….

*Пӳлĕме Чакак вĕçсе кĕрет.*

**Чакак:** Сана лайăх, Куçка, эсĕ юрă юрлатăн.

**Куçка :** Мĕншĕн юрлас мар-ха ман, кăмăл- туйăмсем лайăх чух. Эсĕ мĕншĕн ун пек калатăн вара, санăн кăмăлсем япăх-им?

**Чакак:** Ăçтан лайăх кăмăлсем пулччĕр-ха унта, чак-чакак , вăрманта ав еплерех ĕçсем пулса иртнĕ вăхăтра…

**Куçка :** Эпĕ тахçанах вăрманта пулман та, мĕскер пулса иртет вара унта?

**Чакак:** Санăн юлташу, Арçури, сана валли çыру парса ячĕ, хулара шыраса тупса алăранах тыттарма хушрĕ.

**Куçка :** Мĕнле хăрушлăх сиксе тухнă тата унта?

**Чакак:** Эсĕ çырăвне хăвăртрах вула, манăн часрах каялла вăрмана çитмелле, мана ĕçсем кĕтеççĕ.

*( Çырăва парать те вĕçсе тухса каять)*

**Куçка :** ( *Çыру вулать*) « Манăн юлташăм, Куçка, инкек сиксе тухрĕ кунта пирĕн. Тухатмăш карчăкăн чи юратнă шăлĕ ыратнă пирки, вăрманта канăç çухалчĕ. Пĕр вăрман кăшкăрать, улать. Варманти пур чĕр-чун та унран хăранипе хăйсен шăтăкĕсенче чĕтресе лараççĕ. Куçка, тархасшăн инкекрен хăтар пире! Санăн юлташу, Арçури .»

**Куçка :** Чăнах та ĕçсем пите лайăхах мар. Юлташăма пулăшма васкас, халех çула тухас. Иккĕн иккĕнех, мĕн те пулин шутласа тупăпăр. ( *хутаçне çурĕмĕ хыçне çакать те тухса каять.*)

***2-мĕш картина.***

*Вăрман уçланки . Тунката çинче хуп-хура пит куçлă Арçури макăрса ларать. Пĕр аллине бинтпа çыхса хунă. Куçка кĕрет.*

**Куçка :** Салам, юлташăм, Арçури! Мĕн пулă сана? Кам сана çапла тăрмаласа та варласа пĕтернĕ?

**Арçури:**(*нăйкăшнă сасăпа*). Куçка, Куçка! Кам пултăр, паллах Тухатмăш карчăк! Вăл халĕ пурне те япăх тăвать: пĕрне ура хурса ÿкерет, теприне рогаткăпа перет. Мана кукăль çитереп тесе чĕнчĕ те кĕнĕ- кĕмен алла алăкпа хĕстерсе лартрĕ. А-а-а-а (*макăрать*)

**Куçка :** Çитĕ сана макăрса. Макăрса ларнипе ĕç пулмасть. Атя каяр ун патне, ăна часрах сывалма пулăшар.

**Арçури:** Каясса кайăпăр, анчах эпĕ унран ух! Питĕ хăратăп. Мĕнле сыватăпăр ку карчăка?

**Куçка** : Манăн пĕр шухăш пур, сана эпĕ çула май каласа парăп. Халĕ вара васкар! ( *юлташсем калаçса тухса каяççĕ)*

***3-мĕш картина***

*Тухатмăш карчăкăн пÿрчĕ. Пÿрт çумĕнчи йывăçсем çап-çара лараççĕ. Пÿртрен савăт- сапа шакăртатни илтĕнет. Хутран –ситрен пÿрт чĕтренсе илет. Тухатмăш карчăкăн сасси илтĕнет*: Ай-ай-ай! Ап-па-пап! Мĕскенскер эп! Мĕскенскер! *( кантăк çĕмĕрĕлнĕ сасă илтĕнет*)

**Арçури:** Куратăн-и, Куçка, вăрманти пĕтĕм йывăçсем çап-çара лараççĕ, кайăксем хăранипе кĕр çитмесĕрех кăнтăра вĕçсе кайрĕç.

**Куçка :** Эпĕ калаçса пăхам-ха малтан унпа, тен ăна тухтăр патне кайма сĕнмелле ? ( *алăк патне пыма кăна пуçлать, алăкран ун патнелле турчка вĕçсе тухнине курсан Куçка каялла çаврăнса тарать).*

**Арçури:** Куратăн-и, урсах кайнă пирĕн карчăк! Вĕрет, сурать, вăрçтарать.

**Куçка :** Ырăпа мар пулсан, эпир ăна чеелĕхпе илĕпĕр. Акă мĕн, юлташăм. Халех эпĕ пÿрт тăррине хăпарăп, эсĕ вара çак йывăç хыçне пытан та эпĕ паллă парасса кĕтсе тăр. Эпĕ алă çĕклесен хăвăрт кăна пÿрт патнелле чуп та алăка вăйпала карт турт. Ăнлантăн- и?

**Арçури**: Юрĕ. Эс мĕн хушнине тăвăп.

**Куçка :** ( *пÿрт тăррине хăпарать те, мăръерен хăрушă сасăпа кăшкăрма тытăнать*)Э-хе-хе! Эсĕ мĕн, Тухатмăш карчăк, пурне те хăратса пĕтернĕ. Кам ирĕк панă сана вăрманти чĕрчунсемпе кайăк- кĕшĕксене хăратма?

**Тухатмăш карчăк**: Ай-уй, пĕтрĕм! Мĕн япали ку? Кам калаçать манпа? Сасси епле усал та тискер ! Кам эсĕ ? Сана манран мĕн кирлĕ?

**Куçка :** Эпĕ пĕтĕм тĕнчери Тухатмăш карчăксен хуçи! У-у-у! Кала, мĕншĕн эсĕ хăвăн вăрманти ĕçна тумастăн, пĕтĕм йĕркене пăсатăн?

**Тухатмăш карчăк:** Ах, пачушки! Мĕнле ĕçлес-ха манăн, ара миçе кун ĕнте чăтмалла мар шăл ыратать пулсан.

**Куçка** : Шăлна, эппин, кăларса ывăтмалла!

**Тухатмăш карчăк**: Мĕнле вăл кăларса ывăтмалла? Пĕртен- пĕр юратнă шăла-и? Ним тусан та кăлармастăп! (хăранипе стена çумне çыпăсса ларать)

**Куçка :** Апла пулсан сана эпĕ вăрмантан кăларса яратăп та сан вырăна çамрăкраххине илсе килетĕп. Тен вăл лайăхрах ĕçлеме пуçлĕ!

**Тухатмăш карчăк:** А-а-а! Эпĕ вара ăçта каятăп? Вăрмансăр, хамăн пӳртсĕр, ăçта манăн пурăнмалла? Пĕтмелипех пĕтетĕп вĕт вара эпĕ! ( *каллĕ-маллĕ утать, аллипе сулать*) Ну,кала эппин, шăла мĕнле кăлармалла?

**Куçка :** Часрах пуçтарăн, хулана, больницăна стомотолог патне санăн васкамалла!

**Тухатмăш карчăк:** Ăçта- ăçта? Хулана? Стомотолог патне? Ку тата мĕнле усал? Ячĕ те питĕ хăрушă. Эпĕ унран халех хăратăп. Çук, ним тусан та каймастăп! Вилсен те килтех вилем, ун çăварне лекиччен.

**Куçка :** ( *Арçури енне çаврăнса*). Ним тусан та ӳкете кĕртейместĕп ку карчăка. Манăн тепĕр меслет пур. *( каллех мăръерен кăшкăрать*). Апла пулсан эсĕ питĕ çирĕп çип ил те пĕр вĕçне çекĕл туса шăл çине тăхăнтарт. Лайăх çыхса ларт, атту усси пулмасть.

**Тухатмăш карчăк**: Пулчĕ, çыхрăм!

**Куçка** : Халĕ çипĕн тепĕр вĕçне алăкăн хăлăпĕнчен çыхса хур.

**Тухатмăш карчăк**: Ку тата мĕн тума?

**Куçка :** Çых тенĕ сана, ан калаçса тăр!

**Тухатмăш карчăк**: Çыхрăм, халĕ мĕн тумалла?

**Куçка :** Халĕ кĕтсе лар!

*Куçка аллипе Арçурине паллă парать, лешĕ хăвăрт кăна пӳрт патнелле чупса каять те алăк халаппинчен вăйпала карт туртать. Тухатмăш карчăк питĕ хытă кăшкăрса, аллипе питне тытса чупса тухать, унта вăл Куçкапа Арçурине асăрхать.*

**Тухатмăш карчăк:** А-а, эсир-и-ха кунта, ашкăнчăксем! Çиччас эп сире…( шăпăр ярса тытать)

**Куçка :** Атя, тарар хăвăртрах!

*Куçкапа Арçури тараççĕ, Тухатмăш карчăк вĕсем хыççăн чупать. Пĕр самантра тăп чарăнса тăрать, аллипе питне сăтăрать.*

**Тухатмăш карчăк:** Чим-ха чим, ара манăн нимĕн те ыратмасть çке! Куçка, Арçури ан тарăр манран, ан хăрăр! Эпĕ сире мана сыватнăшăн тав тăвасшăн.

**Куçка :** Пире тав тума кирлĕ мар, анчах та пирĕн сан пата пĕр сĕнӳ пур.

**Тухатмăш карчăк:** Куçка! Арçури! Эпĕ сирĕншĕн тем тума та хатĕр.

**Куçка :** Эппин пире эсĕ сĕтел хушшине чĕн, хулари стомотолăга та.

**Тухатмăш карчăк:** Эсир манран, ватă çынран, куласшăн-им? Ĕмĕрне те çав усала хам киле чĕнместĕп, мĕншĕн тесен эпĕ ăна пĕлместĕп, пĕлессĕм те килмест. Ун пирки çăвар та ан уçăр.

**Куçка :** Ăплан-ха эсĕ, асанне! Стомотолог вăл усал мар, вăл çын, тепĕр майлă каласан шăл тухтăрĕ.

**Арçури:** Шăлсене кăна юсанипе кăна çырлахмасть, тата тĕрлĕрен усăллă канашсем парать, шăл тата шăл тунисем ыратсан мĕн тумаллине калать.

**Тухатмăш карчăк:** Ну, апла пулсан сирĕн стомотолог çын кăна пулсан , чĕнĕр эппин. Эпĕ вара ун пек хăна валли сĕтел çине пылак кукăльсемпе канифетсем хатĕрлесе хурăп.

*Куçка телефонпа стомотолога хăнана чĕнет, çав вăхăтра Тухатмăш карчăк сĕтел хатĕрлет. Пӳлĕме шăл тӳхтăрĕ кĕрет.*

**Шăл тӳхтăрĕ**: Сывă-и, асаннеçĕм, хитре пикеçĕм! ( чечек çыххи тыттарать) Сывă-и, туссем!

**Тухатмăш карчăк**: И-и, эсĕ чăннипех те пĕртте хăрушă мар. Питĕ кăмăлла та ырăскер. Иртĕр сĕтел хшшине, хăналанăр.

**Шăл тӳхтăрĕ:** Тавтапуçах!( *сĕтел çине пăхса тĕлĕнет*). Асанне, эп сăнанă тăрăх, эсĕ пылак çиме юрататăн пулмалла.
**Тухатмăш карчăк**: Чăн сăмахăн суи çук, пылаксăр пĕр кун та пурнаймастăп : торт, канифет, шоколачĕ, мармелачĕ манăн юратнă апатсем. Тата леш патак çине чăмаккаласа хунине, ĕмеллине « Шупа- шупс» текеннднине пуринчен те ытларах юрататăп.
**Шăл тӳхтăрĕ**: Апла пулсан ,асанне, эсĕ кариеспа туслă.
**Тухатмăш карчăк**: Кампа, кама? Кащейпа , виçĕ пуçлă çĕленпе, шыв йăмпăлкипе туслă эпĕ, кариес пирки вара пĕрремĕш хут илтетĕп. Вăл вара кам тата?
**Куçка** : Кариес вăл- шăлсене пĕтерекен, унпала пĕтĕм пылак туслă.
**Арçури**: Апла пулсан, кариес шăпах та санăн юлташу, çавăнпа  юратнă шăлу ыратма пуçланă.
**Тухатмăш карчăк:** Мана ун пек юлташсем кирлĕ мар! Вăт инкек! Мĕнле хăтăлмалла-ха ман унран?
**Шăл тӳхтăрĕ:** Шăлсене упрамалла, сыхламалла.
**Тухатмăш карчăк**:  Манăн халĕ шăлсене сыхлама хуралçăсем тупмалла-и?
**Куçка :** Çук, çук! Нимĕнле хуралçă шырама  та кирлĕ мар. Упрамалла, сыхламалла тени вăл- пылак нумай çимелле маррине пĕлтерет.
**Тухатмăш карчăк:** Ак тамаша! Вара халĕ ман хамăн юратнă « Шупа- шупспа» сывпулашма лекет-шим вара? Мĕн çисе пурăнмалла-ха манăн апла малашне?
**Куçка** : Пахча çимĕçсемпе, улма çырласемпе туслă пулмалла.
**Арçури:** Нумайрах сĕт, турăх ĕçмелле, тăпăрч та çиме манмалла мар.
**Шăл тӳхтăрĕ**: Питĕ тĕрĕс канашсем паратăр,эсир юлташсем. Çак апатсенче питĕ нумай кирлĕ витаминсем. Вĕсем сирĕн шăлсене упрĕç, чирлеме памĕç.
**Тухатмăш карчăк:** Халĕ шăлсене мĕнле упрамаллине ăнлантăм, мĕнле сыхламаллине чухлаймастăп-ха?
**Шăл тӳхтăрĕ:**  Ун пирки сана ачасем каласа парĕç.
**Тухатмăш карчăк:** Çак шĕверккесем те шăлсене мĕнле сыхламаллине пĕлеççĕ-и?
*Ачасем хăйсем мĕнле шăлĕсене сыхланине, упранине каласа параççĕ. Шăл тӳхтăрĕ вĕсене мухтать.*
*-шăла кунне икĕ хуччен ирпе тата каçпа тасатмалла: ирпе апат çиеччин, каçпала апат çинĕ хыççăн;*
*-питĕ вĕри апат  та, питĕ сивĕ апат  та шăлсене сиен кӳме пултараççĕ;*
*- апат çинĕ хыççăн çăвара лĕпĕ шывпала чӳхемелле*
*-çулталăкра икĕ хутччен шăл тухтăрĕ патĕнче пулмалла*
**Тухатмăш карчăк**: Тавтапуç сире, ачасем, мана ватă çынна ăс-тăн панăшăн. Малашне эпĕ эсир вĕретнĕ пек тăвăп.
**Шăл тӳхтăрĕ:** Хăнара питĕ лайăх, анчах мана  чирлисем кĕтеççĕ. Манăн вĕсене пулăшма васкамалла. Эсĕ, асанне, малашне шăл ыратсан тӳрех шăл тухтăрĕ патне хăрамасăрах васка, вăл сана яланах пулăшĕ. Чипер юлăр! ( Тухса каять)
**Куçка :** Манăн та киле васкамалла. Пирĕн хĕрт-суртсен киле нумайлăха пăрахса кайма юрамасть. Эсир кунта тек ан ашкăнăр, туслă пурăнăр. Эсĕ вара, асанне, хăвăн хăрăк шăлна ил те кĕлете тухса сулахай хулпуççи урлă ывăт. Ывăтнă чух çавăн пек асамлă сăмахсем кала: « Шăши, шăши, ил манăн хăрăк шăла, пар ун вырăнне  лайăх çирĕп шăл». Вара санăн малтанхинчен те çирĕпрех шăл шăтса тухĕ. Ну, халĕ чипер юлăр.   ! ( Тухса каять)
**Тухатмăш карчăк:**  Арçури, тусăм, пирĕн те ĕçсем нумай. Хам тунă йăнăшсене кайса тӳрлетмелле.

**Арçури:** Атя, каяр! Иккĕн çăмăлрах пулĕ.

*Ачасемпе сывпулашса тухса каяççĕ.*